«Чăваш халăх сăмахлăхĕнче тĕл пулакан ĕç хатĕрĕсем»

тĕпчев ĕçĕ

Умĕн калани

Ĕçĕн тĕллевĕсем:

1.Тавра курăма аталантарасси.

2. Халăх сăмахлăхĕнче тĕл пулакан хăш-пĕр ĕç хатĕрĕсене тупса тишкересси, тĕпчесси.

Задачисем:

1. Тĕпчев –шырав ĕçне хăнăхса пырасси.
2. Шухăша çырса пама вĕренесси.
3. Шыравпа тĕпчев ĕçĕнче тĕрлĕ мелсемпе тата меслетсемпе усă курасси.

Тĕпчев ĕçĕн сăлтавĕсем:

1. Хăш-пĕр ĕç хатĕрĕн ячĕсем манăça тухса пыраççĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕсене тупса палăртасси.

Чăваш мĕн авалтан ĕçченлĕхпе, ĕçе тĕплĕ тума юратнипе палăрнă. Хăйĕн ачине чăваш «шĕшлĕ аври пысăкăш пулсанах» ĕçе хăнăхтарнă. Ĕç тăвас тесен ĕç хатĕрĕ те кирлĕ теççĕ. Чăваш чĕлхинче ĕç хатĕрĕсен ячĕсем йышлă: кĕреçе, кĕрепле, çава, çурла, кĕнчеле, тылă, шĕшлĕ, катмак... Хăш-пĕр ĕç хатĕрĕпе паян усă курманран вĕсен ячĕсем те манăçса пыраççĕ. Сăмахран, пир тĕртмелли ăса, йĕрĕлчĕ, хĕç, хултăрчă халĕ ытларах музейсенче кăна курма пулать. Çурлапа усă куракан та сайра паян. Хирсенче комбайн ĕçлет, пахча уттине те çава-çурлапа усă курса вырмастпăр та, çулмастпăр та. Мотоблок текенни е бензо-электроçавасем халь кĕрлеççĕ пахчасемпе уй-хирсенче.

Çавăнпа та эпĕ хăш-пĕр ĕç хатĕрĕсем çинчен пĕлес тесе, вĕсем халăх сăмахлăхĕнче тĕл пулнин тăтăшлăхне тĕпчерĕм.

Кĕнчеле

Кĕнчеле- прялка. Çăм , сӳс арламалли хатĕр. Ларкăчĕ çине аврине çирĕплетеççĕ. Хĕр ачасене пĕчĕкренех кĕнчеле арлама вĕрентнĕ.

Тупмалли юмахсем. Кукăр çăка айĕнче Ене ятлă хĕр хӳхлĕ. Ĕни выртĕ, хӳри тăрĕ.

Ваттисен сăмахĕсем. Кĕнчелепе тĕнче тытаймăн. Тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле. Вун ик пуртă вăрçман, вун ик кĕнчелеççи вăрçнă. Вун ик пуртă пĕр çĕрте выртнă тет, вун ик кĕнчеле пĕр çĕрте ларайман тет. Кĕнчеле çине сӳсне çӳле çаксан хунямăшĕ хаяр пулать теççĕ.

Сăнавсем.

Кĕнчеле тути чипер пулмасан упăшки мăн сухаллă пулать. Кĕнчелене типтерлĕ çыхмасан качча кайсан упăшки лапаккай пулать. Кĕнчеле арланă чух йĕке вăрăм пулсан качча инçе каясса теççĕ.

Çурла

Çурла- тыръ вырмалли хатĕр.

Тупмалли юмахсем. Çинçе пилĕк ват майра уйран уя кускалать. Хĕлле выртать, çулла мĕн пур тырра кăшлать. Пĕр пĕчĕк кукăрскер пĕтĕм хире çĕмĕрет. Пĕчĕкçеççĕ сысна пĕтĕм хире пуçтарать.

Ваттисен сăмахĕсем. Акман ана çине çурла йăтса каймаççĕ. Аллупа акмасăр çурлапа выраймăн. Çурла кăларасси кун тиркет. Çурла тытма пĕлмен çын вырма та пĕлес çук.

Сăнавсем. Тыръ вырнă чух çурла тутăхсан çумăр пулать. Тыръ вырса пĕтерсен, çынсем кĕлте çине ларса харпăр хăй çурлине пуçтарса хулпуççи урлă ывăтсан камăн çурли аякка кайса ӳкет , вăл вилет теççĕ.

Тĕлĕк. Ача кĕтекен хĕрарăм тĕлĕкре çурла курсан – хĕр ача çураласса.

Катмак

Катмак- мотыга. Çĕре йăрана кăпкалатмалли хатĕр. Катмака тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕрен калаççĕ иккен. Пирĕн ялта матике теççĕ. Мотык, муттик тенине те илтме пулать.

Тупмалли юмахсем. Хăй курпун , чунсăр, çĕр чават.

Катмак ĕç хатĕрĕ ваттисен сăмахĕсенче, сăнавсенче тĕл пулнине эпĕ шыраса тупаймарăм.

Çава

Çава-коса. Утă, тырă çулмалли хатĕр. Çавана çурла хыççăн шутласа кăларнă.

Тупмалли юмахсем. Курăк çиетĕп , шăлăм мăкалать, хăйăр çиетĕп, шăлăм каллех çивĕчленет.

Ваттисен сăмахĕсем. Пулас инкек çавапа тет. Çармăс енче те çавапах ут çулаççĕ. Ĕç умĕн çурла-çавапа пĕрле урапа пăти те хатĕрле тенĕ.Çаву вичкĕн пулсан курăка касасси ним те мар. Çул çавапа çумăрччен, çумăр килсен килелле.

Сăнавсем. Çава чул çине тăрăнни- пурнăç çине пăхни, интересĕсем, кăмăлĕсем килĕшме çук хирĕçӳллĕ.

Çава халăх юррисенче час-час тĕл пулать.

Çивчĕ çава лайăх утă çулма,

Çинçе пӳçĕм лайăх та сулăнма.

Айван ăсăмпалан шухăшлатăп:

Хамăр тăван лайăх та пурăнма.

Утă çулакансен юррисем

Кĕпе-йĕмне хывмашкăн

Илсе лартнă арчине,

Çава , кĕрепле лартмашкăн

Вырнаçтарнă ун айне.

Тылă

Тылă- мялка, трепалка. Тылă кусла йывăççи майлă, 3-4 ураллă. Тылă йывăççи лакăмлă. Хурси авăрлă, тăпсаллă. Тылă йывăççин лакăмне авăрĕ хĕскĕч пек кĕрсе кантăра (шăммине) тыллать, сӳсне уйăрать. Тылă вăрăмăшĕ 3 м таран, çӳллĕшĕ çур метр ытларах.

« Мăнкун иртсен, урам типсен, ака уйăхĕнче кантăр –йĕтĕне тылланă. Ĕçе уяв пек ирттернĕ, ниме тунă,»- тесе каласа пачĕ мана ватă асанне.

Тупмалли юмахсем. Ватă йыттăн хӳри лак-лак. Йытти ленк-ленк, хӳри шанк-шанк. Шăлсăр карчăк шăмă кăшлать. Виç уралла лашам пур. Кăштăрмин куляк-мяк. Ай, вăрăм лакăштак.

Ваттисен сăмахĕсем. Хытă ал тылла та чуптарать.

К.В.Ивановăн «Тимĕр тылă» хайлавĕнче çакăн пек йĕркесем пур:

Пирĕн чăваш арăмĕ

Тимĕр тылла юратмасть,

Пулсан пултăр йĕс тылă,

Йывăççи те начар мар.

Тимĕр тылă ăшĕнче

Шурă шуйттан ларать тет.

Çак йĕркесене çырнă чух Константин Иванов халăх сăмахлăхĕнчи ĕненӳсемпе усă курнă пулĕ тесе шутлатăп.

5

Пуртă

Пуртă-топор. Малтан карал (долото) , хĕç-пăшал шутĕнче тăнă. Пуртăсем тĕрлĕрен пулнă. Ăсчахсем «пуртă» сăмах чăваш чĕлхине инди, иран, араб, финн-угор, тĕрĕк чĕлхисенчен кĕнĕ тесе шутлаççĕ.

Тупмалли юмахсем. Суккăр автан сиксе авăтать. Кун каçиччен таккăн-таккăн та пӳрте кĕрсен юнлă сурса выртăн. Лутра вырăс ял касать. Сĕм вăрманта кăвак йытă вĕрет.

Ваттисен сăмахĕсем. Вăрмана каякан пурттине хăйĕнчен хăвармасть. Ĕмĕрте катăк пуртă та кирлĕ пулнă. Пулман пуртăпа йывăç касма ансат. Çичĕ пуртă пĕрле выртать, ик турахуп пĕрле лараймасть. Вăрмана пуртăсăр каймаççĕ. Сава хыççăн пуртăпа касмаççĕ. Сĕм çук çыннăн та вилсессĕн ним юлмасан катăк пурттипе катăк çĕççи юлнă тет. Пуртă çын касмасăр вакламасть. Тимĕрçĕн пуртти катăк, платникĕн пуртă аври çук, пупăн кĕнеки çук. Тимĕрçĕн пуртти çук, çĕвĕçĕн йĕппи çук.

Сăнав. Пуртă илсе пуртăпа йĕри-тавра çавăрсан çумăр иртсе каять. Çумăр çунă вăхăтра пукан çине пуртă лартсан , çумăр чарăнать.

Тĕлĕксен пĕлтерĕшĕсем. Ача кĕтекен хĕрарăм тĕлĕкре пуртă курсан – ывăл ача çураласса. Пуртă тупсан –арçын ача çураласса, йĕп тупсан – хĕр ача çураласса.

8